Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – **pchd21.ru**
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско-юношеской библиотекой – **www.rdub21.ru** – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства

**Автор: Алексеев Осип Алексеевич**

**Книга: Чăваш вăрманĕ = Чувашский лес**

# Рассказ: ШУРĂ ЧĂРĂШ – ПИХТА

Шурă чăрăш пирĕн тăрăхри вăрмансенче сайра тĕл пулать. Ăна Чăваш ботаника садĕнче, тĕп хуламăрти скверĕнче куратăн. Çĕпĕрте çарта хĕсметре тăнă чухне тайгана тухсан, яштака та çӳллĕ – хăшĕ-пĕри 80 метр çӳллĕшне çити ӳсет - йывăç çине киленсе пăхаттăм. Сухăр шăршийĕ вара вăй панăнах туйăнатчĕ. Яка хупăллă йывăçа пырса ачашланмасăр чăтаймастăмччĕ. Хăшĕн-пăрин хуппи çинче тĕллĕн-тĕллĕн сухăр пуçтарăнакан лакăм-вырăн пур.

Шурă чăрăш лăсăллă ялан симĕс йывăçсен йăхĕнчи хырсен ушкăнне кĕрет. Лăсси тӳрĕ те вăрăм, лаптак вĕçĕ пуклак тунара икĕ çутă йĕр, вĕсем тăрăх – тĕк евĕр вĕтĕ лăсă вырнаçнă. Вăрă йĕкелĕ турат çинче çӳлелле кăнтарса ӳсет. Вăл тăрăхла çавра е цилиндр евĕрлĕ. Вăрлăхлă хупă тата ăна хупласа тăракан хупкăчĕ спираль евĕрлĕ вырнаçнă. Вăрри çунатлă, пулса çитсен хупăлчи те пĕрле ӳкет.

Çĕр çинче 50-а яхăн тĕрлĕ шурă чăрăш теççĕ. Вĕсем сăртлă-туллă вырăнта, сайра чухне çĕр чăмăрĕн çурçĕр пайĕнче те тӳремре ӳсеççĕ. Пирĕн çĕршывра тăхăр тĕрли тымар янă, 16 тĕрлине тĕрлĕ çĕртен илсе килсе чĕртнĕ.

Шурă чăрăша илемшĕн те лартса ӳстереççĕ. Вăл та, вăрманти те паха тĕшĕ параççĕ, унпа стройкăра усă кураççĕ, кил-çуртра кирлĕ тĕрлĕ япалă тăваççĕ. Шурă чăрăш тĕтĕмлĕ тата сывлăш таса мар вырăна юратмасть, хăвăрт хăрать. Шурă чăрăш хуппинчен тата лăссинчен паха та хаклă сухăр; юхтараççĕ.

Пирĕн çĕршывра ытларах Çĕпĕр шурă чăрăшĕ саралăнă, вăл Европăн çурçĕр хăвелтуăхăç тăрăхĕнче тата Çĕпĕрте çирĕп тымар янă. Сивĕрен хăрамасть. Çак йывăçăн лăсси 5 сантиметр тăршшĕ, хура-симĕс тĕслĕ, йăлтăркка. Йĕкелĕ. 5-8 сантиметр тăршшĕ, сухăрлă. Çĕпĕр шурă чăрăшĕпе целлюлозăпа хут производствинче усă кураççĕ. Хуппинчен шурă чăрăш бальзамĕ – ырă шăршăллă мазь тăваççĕ. Унпа тĕрлĕ кантăк çыпăçтарнă çĕрте усă кураççĕ, тĕрлĕ препарат хатĕрлеççĕ. Лăссипе вĕтĕ тураттинчен шурă чăрăш çĕвĕ кăлараççĕ. Вăл парфюмери прозводствинче кирлĕ паха чĕр тавар шутланать, медицинăра канăхвар (эмел) тунă çĕре каять.

Шурă чăрăш вăрăран ĕрчет.

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.